## Астăвăм каçĕ

## «Пирĕн ентеншсен çапăçу мухтавĕ»

(Вечер памяти «Страницы боевой славы»)

Вăтам тата аслă классенче вĕренекенсем валли.

**Тĕллевĕ:** ачасен çынлăх (гуманизм), паттăрлăх, хĕрхенӳлĕх туйăмĕсене хускатасси; паттăрсенчен ырă тĕслĕх илес туйăма аталантарасси.

**Уява иртттермелли пӳлеме илемлетесси:**

- кĕнеке куравĕ «Паттăрлăх пытăр емĕре», Чупай ялĕнчи Тăван çăршывăн Аслă вăрçине хутшăннă çынсем çинчен.
- сцена çинче чечексем, мухтав кăшăлĕ (венок славы), çуртасем
- Никита Зарубина тата Семен Ефремова сăн укерчĕкĕсем
- юрă «Манмастпăр, Никита Зарубин, сана» (кĕвви тата сăвви Г.Моклаковăн)

***1. Ертсе пыракан:*** Ырă кун, хаклă хăнасем!

***2. Ертсе пыракан:***

Сан умăнта асаплă вăрçă çулĕ

Вут-çулăм витĕр курăнса выртать.

... Тăп-тăрă сывлăм пек куççулĕ

Хурçă çынран пăчăртанса тухать. (Ю.Сементер)

***1. Ертсе пыракан:*** Эпир питĕ хавас сире курма паянхи астăвăм каçĕнче . Кашни çул май пуçламăшĕнче пирĕн халăх хаяр вăрçă кунĕсене аса илет. Вăрçă хирĕнче пуç хунисене асăнать, сыввисем умĕнче пуç таять. Кашни çул эпир çак паллă куна уявлатпăр пулин те кăçалхи Çĕнтерӳ кунĕ чи паллисенчен пĕри. Çĕнтерӳ кунĕ çитнĕренпе 70 çул. Çапла, нумай çул иртрĕ пулин те халăх асĕнчен тухмаççĕ вăрçă кунĕсем, киле таврăнман ентешсем, чунри хуйхăпа ырату. Апла пулин те çак уяв кунĕсенче хаваслăхпа та мăнаçлăхпа, савăнăçпа та тав сăмахĕсемпе тулаççĕ пирĕн чĕресем. Пирĕншĕн

тăнăçлăха çěнсе илнě çынсене эпир нихçан та манас çук, нихçан халăх асěнчен тухмěç вěсен паттăрлăхěсем.

***2. Ертсе пыракан:*** Тăван çăршывăн Аслă вăрçине пирěн ял тăрăхěнчен 226 çын кайнă, 129 çын çапăçу хирěнче выртса юлнă е йывăр сурана пула госпитальте вилнě. Тăшман пульли шеллемен салтаксене. Миçе çул иртсен те, ěмěр иртсен те эпир нихăçан та манас çук хамăрăн паттăрсене. Яланах асра тытăпăр пире телейлě те мирлě пурăнăç парнеленě салтаксем çинчен. Вăрçă хирěнчен тăван киле таврăнайманнисене, таврăнсан йывăр сурансене пула вăхăтсăр çěре кěнисене асăнса шăплăх саманчě.(Минута молчания.)

***1. Ертсе пыракан:*** «Ырă ят паттăра тарават», тене ваттисем. 1941-1945 çулсенче мěн тери йывăр, хăрушă пулнă, пур çěрте те вăрçă кěрленě, çěр чěтреннě, çуннă… Вăрçă кашни çыннăн чун-чěрине ыраттарса амантнă. Миçе хěрарăма, миçе ачана тăлăха хăварман-ши?.. Уйрăмах салтак амăшěн чěри кунсерен канăçсăр тапнă, ачишěн пăшăрханнă. Кун çинчен чăваш писателě А. С. Артемьев акă мěнле çырнă: «Эй, салтак амăшě! Темиçе çул аслă çапăçу пынă чух çěрлесерен çичшер вăранса пăшăрханнă аннемěр, юнлă вăрçă хирěнчи ачусене асăнса ура çинчех тěлěк курнă, савăк самантра та савăнаймасăр салтак ывăлусене киле кěтнě аннемěр!..»

**Инсценировка «Салтака ăсатни»**

**Действующие лица:** автор, мать и сын, одетый в военную форму летчика

***Автор*** Амăшне каларě ывăл. Вăрттăн, ерипен:

***Военный*** — Эп вăрçа каятăп, маншăн ан шиклен.

***Автор*** Амăшě чăр пăхрě

***Амăшě*** — Эсě?!

***Автор*** Чакрě, чакрě вăй... Хěрхенсе куççульленмесěр тўсеймерě хăй. Эх, анне чěри! Çунать-çке. Вăл çапла ялан. Çумěнчи ăшă çуначě пушшине туйсан. Йăвине тěрěс-тěкеллěн вăл усрасшăнах. Ун чěппи ěнтě тěкленнě, вăл калать сăмах:

***Военный*** — Ан йӗрсем, ан макăр, ан кулян, анне. Астăватăн-тăр, манман-тăр ху каланине. «Пул хăюллă, тӳрӗ чунлă!» — теттӗн эс мана. Вăхăт çитрӗ, вут та çулăм хыпрӗ таврана. Вăхăт çитрӗ, тӗрӗслетӗр самана пире. Камăн-ха юлас килет-тӗр хыçалти ретре?
Халь Мускавшăн хӗрӗнеççӗ тăшмансем, пӗлеп. Эп — чупай каччи, аннеçӗм, комсомолец эп. Е эп паттăр пулса килӗп каялла киле. Е эп паттăр пулса вилӗп... Сывă пул! Пилле. (военный уходит помахав рукой)

***2. Ертсе пыракан***: Аслă Отечественной вăрçăра Никита Зарубин штурман нимӗç фашисчӗсене сахал мар аркатнă.

***1. Тухса калакан*** : 1943 çулхи (январь) уйăнче Вăрмар районӗнчи Чупай ялӗнче пурăнакан Зарубина Васса Никифоровнана почтальон тăватă кӗтеслӗ çӳхе конверт тыттарнă. Хапличчен виç кӗтеслӗ çырусем илме хăнăхнă хӗрарăм, чӗри йăштах тунипе, конверта аран-аран уçнă. «Сирӗн ывăлăр Зарубин Н.Д. аслă лейтенант хыпарсăр çухалнă» - тесе çырнă пулнă çырура.

«Никита», - пăшăлтатнă Васса Никифоровна. Куççуль витӗр вăл аллинчи хут çине тепӗр хут пăхса илнӗ. - «Хыпарсăр çухалнă… Çук, çук. Пулма пултараймасть!».

1938 çулта çара кайнăччӗ Никита. Хӗвеланăç Украинăна ирӗке кăларнă çӗре хутшăннăччӗ вăл. Унтан летчиксен шкулӗнче вӗреннӗччӗ. Хăйӗн самолӗчепе шурă финсене хирӗç паттăррăн çапăнăччӗ. «Известия» хаçатăн 1939 çулхи декабрӗн 4- мӗшӗнчи кăларăмӗнче «Шурă финсемпе çапăçу» корреспонденцире Н. Зарубин лӗтчик тăшман позицийӗсене бомбосем тӗл лектерсе сирпӗтсе яни çинчен çырнă. Çапăçуран, самолета 8 хутчен снарядсем шăтарнă пулин те, çӗнтерӳпе тухнă. Çак паттăрлăхшăн Совет правительстви Никитăна Хӗрлӗ ялав орденӗ парса чысланă. Ак, халӗ «хыпарсăр çухалнă» текен хăрушă хыпар. Çук, ӗненмест Васса Никифоровна ывăлӗ çухалнине. Вилнине те, хыпарсăр çухалнине те.

15 çул Васса Никифоровна ывăлĕн шăпи çинчен урăх нимĕн те пĕлмен. Кĕтмен çĕртен Ленинград облаçĕнчен çыру килет. «Васса Никифоровна! Тен, эпĕ Сирĕн чĕрере тепĕр хут ыраттарăп. Анчах та сирĕн ывăлăр çинчен пĕлмеллех. Эпир, торф кăларнă çĕрте ĕçлекенсем, Мгинск районĕнчи Александровка ялĕнчен инçех мар шурлăхра 6 метр тарăнăшĕнче самолет тупрăмăр. Самолет ăшĕнче вилнĕ летчик ӳчĕ, документсем пур. Вăл сирĕн ывăлăр – Никита Дмитриевич Зарубин».

«Тупăнтăн иккен, ывăлăм», - куçĕсенчи куççульне тытса чарайман амăшĕ. – Пурпĕрех тупăнтăн».

Халиччен те ывăлĕ вилнине йышăнман амăш чĕри çак хыпара илсен те юратнă тĕпренчĕкне сывах, чĕррех туйнă. Ак, Васса Никифоровна асаилӳсемпе куçĕ умнĕнче Никитĕна курнă, утька сиктернине те, ывăлĕ пĕрремĕш хут утса кайнине те, шкула çӳреме пуçланине те, Сĕнтĕрвăрринчи техникумра вĕреннĕ чухне лайăх паллăсем илнишĕн савăнса каласа панисене те.

Çук, чăтайман ват çын чун. килсе капланнă пысăк хуйăха. Вăл йывăр чирлесе ӳкнипе ывĕлне пытарма каямасть. Ленинград облаçне унăн хĕрĕ Анна мăшăрĕпе Василий Иванович Ивановпа кайнă. Александровкăпа Жихарево поселокĕсенчи пур çын та вăрçăра вилнĕ Совет салтакĕсене пытарнă масара пухăннă. Вĕсем паттăра чыслама нумай чĕрĕ чечек илсе килнĕ. Вилтăпри çийĕн, палăк тавра шĕл кăваррăн чечексем çиçнĕ. Часах Н. Зарубинăн Тăван çĕршывне, Чăваш республикине япалисем, документсем килеççĕ. Вĕсем герой янташ çинчен аса илтереççĕ.

Паттăр лĕтчик кунсеренех сывлĕша çĕкленн, е тăшман позицийĕсене бомбăсемпе аркатнă, е разведкăра вĕçнĕ. Ленинград тӳпинче час-часах фашистсен самолечĕсемпе те куçа-куçăн тĕл пулма тивнĕ вĕсен. Тăшман зениткисен асар-писер перкелешĕвĕ витĕр темиçе хут тухнă.

1943 çулхи январĕн 15- мĕшĕнче Волховпа Ленинград блокадине татас тĕллевпе наступление каяс умĕн 35 авиаполкри ПЕ-2 бомбардировщик тĕшман йышăннă територире разведка тунă. Фронт линий. Урлă каçнă

чух тăшман зенитчикĕсем самолĕта вут тивĕртнĕ. Экипажран иккĕшĕ парашютпа сикнĕ, виççĕмĕшĕ (кайран паллă пулать) – Н. Зарубин штурман хăйĕн вырăнĕнчех вилсе кайнă. Самолет шурлăха 6 метр тарăнăшне анса кайнă. Çак çапăçăва никам та курман, экипаж членĕсем те тупайман. Çавăнпа «Н. Зарубин хыпарсăр çухалнă» тесе хыпар янă та.

Н. Д. Зарубина вилнĕ хыççăн Отечественной вăрçăн пĕрремĕш степеньлĕ оденĕпе наградăланă.

Манмаççĕ Чăвашсем хăйсен паттăр янташне. Республика краеведени музейĕнче Н. Д. Зарубинăн çар япалисем, докуменчĕсем чи хаклă реликвисем пек упранаççĕ. Чупай ялĕнче, Культура çуртне паттăр ятне панă. Шкулта стенд йĕркеленĕ, ялти пĕр урам Зарубин ячĕпе хисепленет. Çамрăк ăру паттăр янташ ячĕпе хавхаланать. Ак, шкул ачисем пуçтарнă тимĕр- тăмăртан 1960 çулта Н. Д. Зарубин ячĕпе хисепленекен тепловоз тунă. Ленинград облаçĕнчи Жихарево станцинчи шкул-интернатри пионер дружини Зарубин ячĕпе хисепленет. Вĕсем летчиксен вилтăприне тирпейлеççĕ, асăрхасах тăраççĕ.

Паттăрсем хапарсăр çухалмаççĕ. Тăван çĕршывăн пуç хунă паттăрсене халăх нихăçан та манмасть.

***1. Ертсе пыракан*:** Георгий Моклаков Никита Зарубина халласа юрă та çырнă.

*Ачасен ушкăнĕ юрлать*

Манмастпар, Никита Зарубин, сана (**Музыка и слова Г.Моклакова)**

1.Манмастпăр, Никита Зарубин, сана
Манмастпăр эпир паттара.
Пуриншĕн те сывăх, янташ, сан ятна
Тытатпăр ир касăн асра.

2.Эс харсăр вĕçевсĕ пулса вăрçара
Çунтарнă тискер тăшмана
Юратнă çер-шывшăн хаяр самантра
Тăман хĕрхенсе кун-çула.

3.Патвар, улăп евĕр чăваш ачине,
Мухтатпăр сана юрăра.
Çак юррăмăр сан палăку вырăнне
Упратпăр тăван халăхра.
4.Усраççĕ ятна Ленинград çыннисем
Янташĕ пекех чĕрере
Пуриншĕн те хаклă та çутă сăнна
Çухатмĕс куçран ĕмĕрех.

***2. Ертсе пыракан*** Вăрçă хирĕнче ирсĕр фашистсемпе çапăçса пуçĕсене хунă патвар салтаксем Чупай ялĕнче татах та пулнă. Пирĕн ялта çуралса уснĕ чăваш ачи Семен Ефремов вăрçăчченех салтак тумне тăхăннă. Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕ пирки Л. Агаков «Советская Чувашия» хаçатра очерк пичетлет. Н. Стуриков çыравçăн «Летел в ночи самолет» ятлă кĕнекинче те «Светил карманный фонарик» тĕрленчĕк пур. Кенеке чăваш кенеке издательствинче 1975 çулта çутă курнă. Тăшмана хирĕç Раççейĕн паттăр ывăлĕсем çинчен каласа парать.

***1. Тухса калакан*** Чупай ялĕнче çуралса ўснĕ Ефремов Çимук, вăрçăчченех салтак тумтирне тăхăннăскер, Атăл тăрăхĕнчен Днепр патне çити утса тухасса тĕлленмен те. Ак ĕнтĕ вăл, разведчик-десантник, юлташсемпе пĕрле Днепр çыранĕ хĕрринче выртать. Юханшывăн сылтăм енче фашистсем. Çыран хĕррипе лартса тухнă пулемĕтсем, зениткăсем хутран ситрен сас параççĕ. Калăн çав ан çывхарăр, каçармастпăр сире ку енне, пĕтеретпĕр теççĕ пек.

Совет Çарĕн командованийĕ фашистсен аэродромне тĕппипех пĕтерес шутпа штурмовиксен ушкăнĕсене умлăн-хыçлăн кăларса ячĕ. Вĕсем бомбăсене çунтармалли-сĕрмелли упракан складсем çине пăрахнă та, ав, каялла килеççĕ. Малашне фашистсен «хурчкисем» пирĕн çарсене аптăратаймĕç ĕнтĕ, аэродромĕ те юрăхсăра тухрĕ, складсем те сывлăшалла сирпĕнчĕç, ак, кур ĕнтĕ – мĕнлерех çунаççĕ вĕсем. Анчах пирĕн

салтаксен савăнасси нумая пымарĕ. Темиçе каçранах аэродром чĕрĕлчĕ. Фашистсем каллех сывлăшра хуçаланма тапратрĕç. Пирĕн штурмовиксем аэродром çинее бомба хыççăн бомба тăкни пулăшмарĕ - ирччен нимĕççсем самолет çулне тик.слесе якатма та ĕлкереççĕ, вĕсен самолечĕсем каллех сывлĕша çĕкленеççĕ. Тĕлĕнмелле мар-и-ха, бензин склачĕсене вĕçех сирпĕтсе çунтарса янă, сывлăш разведки те çакна çирĕплетет: сăнӳкерчĕксем çинчен пĕр хуралтă та пĕр цистернă та курăнмаççĕ, «мессерсем» вĕçмеле мар вĕт-ха, ăçтан бензин илеççĕ-ха вĕсем? Çак ыйтăва хуравлас тесе командирсем темле те пуç ватрĕç - тупсăмĕ тупăнмарĕ.

***2. Тухса калакан*** Çимук Ефремовсен ушкăнĕ çакăн пек задани илчĕ, çыран хĕррине пытанса лармалла та тĕпчесе пĕлмелле, тăшман авиацийĕ мĕнле майпа сывлĕша çĕкленет, ăçтан бензин илет;

Днепр хăйĕн шывне чăрсăррăн хăвалать те хăвалать. Кĕркуннехи сивĕ çил питрен кастарать. Тăшманран асăрханмаллине систерет тейĕн.

Тăшман аэродромĕ те ĕçлет, сывлăша бомбардировщиксем те, истербительсем те çĕкленсех тăраççĕ. Юрать-ха, таврăннисем сахалланнăçемĕн сахалланаççĕ. Эппин, пирĕн маттур летчиксем те тăрăшаççĕ – тăшмана сывлăшра хуçаланма памаççĕ. Фашистсем пирĕн çарсене Днепр патне çывхартасшăн мар урăм-сурăм çапăçаççĕ. Авиацине те шеллемеççĕ, пĕрсе антарнисем вырăнне çĕннисем килсех тăраççĕ. Бензинне те таçтан илме май тупнă. Кур-ха, чееленеççĕ.

***Инсценироква «Хушн*ă ĕç»**

Действующие лица: автор, Çимук, командир.

***Автор*** О-о! Днепр… Сарлакан та мăнаçлăн юхса выртакан Днепр… Ав мĕнле иккен эсĕ, Раççейпе Украинăна чăмăртакан мухтавлă юханшывĕ халĕ вăл фашистсем хупăрласа илнĕ çĕр илемĕшĕн хуйхăрнăн тата та вăйлăрах, хум хыççăн хум кăлара-кăлара хăй юххипе васкать. Хире-хирĕç тăракан хăрушă вăйсене тытса чарнăн юхать те юхать. Уншăн тăшманĕ те тăшман мар, тăванĕ те пĕрех вăл – Днепр!

***Командир***: Итлĕр-ха, Сержант (чĕнчĕ командир Ефремова)

- Кур,  Днепр çийĕ малтанхи пек мар.  Ме бинокль, сăна.

***Вăрçă салтаке*** (бинокле алăран ямарĕ, Денпр çине сăнаса пăхать)

- Чăнах та! Шывран сылтăм çыран çинелле темле хура йĕрсем тухни курăнать. Вĕсене хирĕç юханшыв варринелле пĕр шурă япала пур. Çук, çук ку шыв кăпăкĕ мар. Вăл пĕр вырăнта тăрать, юхса каймасть.

***Командир (*** мухтаса) - Тĕрĕсех асăрхарăн. Çыраналла тухакан йĕрсем пăрăхсем пулмалла. Вĕсем шыв айĕнчен тухаççĕ те аэродром еннелле каяççĕ. Эппин, вĕсемпе бензин пырать.

***Автор*** Çак хыпара командование раципе питĕ хăвăрт пĕлтерчĕç. Нумай та вăхăт иртмерĕ, разведчиксен ушкăнне çĕнĕ задани пачĕç. Цистернăсем выртакан тĕле пĕр-пĕр паллă хумалла. Пирĕн бомбардировщиксен çĕрлехи вĕçĕве ăнăçлă ирттĕр тесен, летчиксене фашистсен вăрттăнлăхне тĕл кăтартмалла. Унсăрăн бомбосене ăçтала тăкмаллине те пĕлеймĕн, çухатусем пулма пултараççĕ.

***Командир***: Ларха Семен. Пирен Днепр урлă каçакан çынна тупмалла

***Çимук*** - Эпĕ хушăва пурнăçлама пултаратăп.

***Командир***(иккĕленсе) Пултарайăн- ши? Икĕ-виçĕ çухрăма яхăн ишме тивет вĕт. Шывĕ питĕ сивĕ.

***Çимук*** - Пултаратăп. Çара иличчен Атăл урлă темиçе хут та ишсе каçнă. Çарта та ăмăртусене татăшах хутшăннă. Лайăх хатĕрленсен шыв сиввине чăтса ирттерме пулĕ.

***Командир*** Çемен, ишме йывăр пулать. Унтан та йывăрри – цистернăсен вырăнне тупасси. Çав тĕле пĕчĕк хунар лартмалла та каялла таврăнмалла-çке!

***Çемен*** – Шанăр, мана, командир юлташ. Мансăр пуçне çакна никам та пурнăçлаймĕ.

***1. Тухса калакан*** Десантник- разведчиксем Ефремов сенржанта кунĕпех хăрушă çулçĕреве хатĕрлерĕç, ÿт-пĕве пулă çăвĕпе сĕрчĕç , сивĕ хутлатса ан ларттăр, эрехпе услам çăва пĕр çыхха хучĕç, вăй хушма кирлĕ пулĕ. Пĕчĕк хунарсем иккĕ тупрĕç.

Акă каç ĕнтрĕкĕ Днепр сийĕн сарăлчĕ. Тӳпене çăлтăрсем тухрĕç. Кунĕпе алхаснă вăйлă çил те кăштах тамалчĕ. Çутçанталăк та пирĕн салтака кăшт хĕрхеннĕн туйăнать.

***2. Тухса калакан*** Ефремов Çимук шывра ĕнтĕ Днепр ăна хăйĕн сивĕ ытамне йышăнчĕ. Сержант тĕрлĕ мелпе шыв «кăпăкĕ» еннелле ишрĕ.

Цистернăсем выртакан вырăна çитмелле пекчĕ ĕнтĕ – анчах ăçта-ха çав «кăпăк»; Çимук сылтăмалла та, суллахаялла та ишсе пăхрĕ. Тинех! Акă вăл, çынна чăтса тăмалăхах, çинçе троспа шыв айĕнчи цистернăсенчен кăкарнăскер. Аякрах та мар тăшман вырнаçнă çыран та хуран курăнма пуçларĕ. Эппин, васкамалла. Çутăлас енне кайсан бомбомбардировщиксем вĕçсе килеççĕ.

Çимук Ефремов электрохунара «кăпăк» çине вырнаçтарасшăн пулчĕ. Анчах шăннă алăсемпе хăвăрт ĕçлеме май çук. Çил те вăйланчĕ, хумсем çинче «кăпăк» та тĕк тăмасть, акă, ун çине вырнаçтарнă хунар та силлене-силлене мăч-мăч тума пуçларĕ. Хунарăн çулелле çеç çутатмаллаччĕ, анчах шутланă пек пулмарĕ. унăн çутисем шыв тăрăх сарăлчĕç. Çимук пуçĕнче шухăшсем çиçĕм пек пĕрин хыççăн тепри вĕлтлетрĕç: «Мĕн тумалла? Хунар çутине фашистсем асăрхарĕç тĕк»

Сасартăк аякран йывăррăн кĕрлени илтĕнчĕ. Эппин, пирн бомбордировщиксем тӳпере ĕнтĕ. Самантран вĕсем кунта çитеççĕ. Ефремов Çимук пĕтĕм вăйа пухса каялла çаврăнчĕ. «Кăпăкран» уртăнса тӳпенелле тинкерчĕ. Чăнах та, самолет çутисем мĕлтленни лайăхах курăнать, ак вĕсене тăшман прожекторсем хыпашлама пуçларĕç, зениткăсен вутлă чĕлхисем ялт та ялт турĕç. Самолетсем хăйсене тĕле ширани сисĕнчĕ, вĕсем Днепр çийĕн çаврăнма пуçларĕç. Эппин, вĕсем хунар çутине асăрхамаççĕ!.. Çимук шыв кĕмен хутаçран диномохунара кăларчĕ те çӳлелле çклерĕ, пусăкч çине-çине тĕртрĕ. Çутă пайăркисем тӳпенелле ыткăнчĕç. Асăрхарĕç!.. Бомбардировщиксем тĕл енне умлăн хыçлăн пĕме пуçларĕç. Днепр йынĕшнĕ пек сасă кăларчĕ. Çук иккен, кусем бомбосем пулчĕç. Вĕсем чашлатса шыва кĕрсе кайрĕ ç те янăравсăр сасăпа хуплатма пуçларĕç. Пĕрре-

иккĕ… Семен Ефремова вăйлă шыв хумĕ пĕрре хăй айне турĕ, тепре çиеле кăларса пăрахрĕ. Темиçе секкунт хушшинчех сержант куçĕ умĕнче хăйне çывăх сăнсем шуса иртрĕç, ашшĕ -амăшĕ, шăллпе йăмăкĕ, тăван ялĕ.

Шыв айĕнче сирпĕнекен бомбосем ухлатни те илтĕнми пулчĕ Çемене. Хăй айĕнчен вут-çулăм тапса тухнине çеç сисе юлчĕ вăл. Хаватлă вăй ăна ывтăнтарса ячĕ те хăй айне турĕ – паттăр салтака шыв ытамне илчĕ.

Юхать: юхать мăнаçлă Днепр. Ун юххин шывĕнче ирĕклĕхĕмĕршĕн çапĕçса вилнĕ салтаксен сăнĕсем палăрса астăвăмăрта сыхланса юлаççĕ.

***Ертсе пыракан*** Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине Никита Зарубин тата Семен Ефремов пек пуç хунă кашни салтак ячĕ халăх асăнчĕ пулма тивĕç.

Чыс туса пуçа пĕкетпĕр
Хаклă палăк умĕнче.
Чечексем çитĕнтеретпĕр
Тăрăшса ун çумĕнче…
Паттăрсем мире сыхланă,
Хупнă пирĕншĕн куçне.
Пăхаттирсене кам манĕ?
Палăк тупрĕ ыр ятне.

***Ертсе пыракан*** Тăван çĕршыва, тăван тавралăха, тăван яла сыхлакансен умĕнче пуçа таятпăр!

## Усă курнă литература

1. Зайцев Я.Н., Деревни - побратимы. Очерки села Батеево и деревни Чубаево Урмарского района Чувашской республки. – Чебоксары: «Новое время», 2010. – 432с.

2. Михайлов М., Уроженцы Чувашии на фронтах Великой Отечественной войны. – Ч.: Чувашское книжное издательство, 1987.

3. Письма командиров Н.Д.Зарубина и его товарищей.

4. Стуриков Н., Летел в ночи самолет. – Чебоксары: Чувашское книжное издательство, 1975. – 200с.

5. Хузанкай П. Çырнисен пуххи (Собрание сочинений)

Леонтьева В.Н., заведующая
Чубаевской сельской библиотекой